**«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»**

# Ярапайкассисен хăтлă Культура çурчĕ пулать



***«Культура» наци проекчĕ шайĕнче кăçал пирĕн районти Ярапайкасси ялĕнче Культура çурчĕ тăвассине хаçат вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Ĕçсем кунта кăçал март уйăхĕнче пуçланчĕç. Культура çурчĕ кăçалах уçăлмалла.***

Ку вăхăта Культура çуртне хăпартнă, ăна çи витти айне лартнă.

Çĕнĕ объекта тума пурĕ 33 млн ытла тенкĕ уйăрнă.

Муркаш район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕ Любовь Рыжкова строительство ĕçне контрольлесех тăрать. Çак кунсенче те вăл подрядчикпа тĕл пулса калаçрĕ.

Объектра строительство ĕçне вĕçленĕпе пĕрех. Халĕ ĕçсем шалта пыраççĕ. Котельнăй хатĕр, çак кунсенче унта çут çанталăк газĕ çитмелле.

Территорире асфальт сарнă, симĕс вырăнсенче газон курăкĕ пулĕ, вăррине акса хăварнă.

Культура çуртне кирек камăн та пăтăрмахсăр кĕмелле пултăр тесе пандус туса хăварнă.

Унчченхи проект документацине улшăнусем кĕртнĕрен, ĕçе пĕтĕмĕшле декабрĕн 10-мĕшĕччен вĕçлемеллине палăртнă.

Ярапайкассинчи Культура çурчĕ хăтлă та илемлĕ пуласси халех курăнать. Çавăнпа та Ярапайкасси, Милютакасси, Ермак, Итакачкасси, Елача ялĕсенче пурăнакансем кунта малашне хаваспах çӳресси те иккĕлентермест.

# Тĕп больницăра – çамрăк специалист

***«Сывлăх сыхлавĕ» наци проекчĕ шайĕнче «Чăваш Республикинчи сывлăх сыхлав системинчи организацисене квалификациллĕ кадрсемпе тивĕçтересси» регион проекчĕ пурнăçланать. Çав проекта пурнăçлас ĕçе Муркаш район тĕп больници те активлă хутшăнать – «Земство тухтăрĕ» тата «Земство фельдшерĕ» программăсемпе килĕшӳллĕн специалистсем яла ĕçleме килеççĕ.***

«Сывлăх сыхлав тытăмĕн уйрăмах пуçламăш сыпăкĕнче кадрсен çитменлĕх ыйтăвне татса парасси паян чылай сиплев учрежденийĕнче çивĕч ыйту пулса тăрать. «Земство тухтăрĕ» тата «Земство фельдшерĕ» программăсем ĕçлени вара пысăк пулăшу кӳрет. Çавăн пекех тĕллевлĕ майпа вĕрентессин эффективлăхне те палăртмалла. Вĕренме кĕнĕ чухне сиплев учрежденийĕ абитуриентпа килĕшӳ тăвать: тĕллевлĕ майпа вĕрентесси çинчен тата вĕренсе пĕтернĕ хыççăн специалист çав сиплев учрежденине ĕçлеме вырнаçасси çинчен. Ку пĕр енчен абитуриента конкурс витĕр çăмăлрах тухса вĕренме кĕме май парать, иккĕмĕшĕнчен – больницăна кирлĕ специалист пуласси пĕлсе тăрать», – каласа парать Муркаш район тĕп больницин тĕп врачĕ Оксана Попова.

Нумаях пулмасть «Земство тухтăрĕ» программăпа район больницине çĕнĕ специалист – Марина Смирнова терапевт ĕçлеме килчĕ. Вăл Муркаш районĕнчех çуралса ӳснĕ. Çамрăк терапевт 26 номерлĕ участока пăхса тăрать: Ахмане, Ситуккасси, Калмăк, Çурлатри, Ятман тата ытти ялта пурăнакансен сывлăхне тĕрĕслесе тăрать.

«Врач пулас шухăш манăн олимп резервĕн училищинче вĕреннĕ чухне çуралчĕ. Унта эпĕ профессиллĕ шайра велоспортра хамăн ăсталăха туптарăм. Вĕренӳ программинче мана анатоми, физиологи, сиплев физкультури предметсем килĕшетчĕç. Çавăнпа та юлашки курсра эпĕ малалла медицина факультетне вĕренме кĕме шутларăм», – пĕлтерчĕ хăй пирки çамрăк специалист.



Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультечĕн иккĕмĕш курсĕнче вăл «Волонтеры-медики» юхăм ретне тăнă. Çавăнтанпа санитари пĕлĕвне сарас енĕпе тимлеме тытăннă, çынсене сиенлĕ йăласемсĕр пурăнни, харпăр хăйĕн сывлăхне упрани пурнăçра питĕ пысăк вырăн йышăннине ăнлантарнă. Çак юхăм иртгерекен мероприятисем вăхăтĕнче çынна пĕрремĕш пулăшу пама вĕренсе пынă.

«Халĕ, пациентсене йышăннă май, вĕсене пулăшма май пуррине, вĕсен ыратăвне çăмăллатма май пуррине курса тăратăп. Врач профессине суйласа илнĕшĕн тата медицина отраслĕнче манăн малалла аталанса пыма май пурришĕн савăнтăп», – çапла палăртрĕ хăйĕн шухăш-кăмăлне Марина Смирнова терапевт.

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*

**Пирĕн рейд**

# Хамăр ĕçлемесен кам туса парĕ?

**Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе районта ĕçсем епле пынине тĕрĕслесси малалла пырать. Иртнĕ юнкун, чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче, ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнипе паллашма эпир «Оринино», «Свобода», «Ударник», Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Путь Илича» агрофирмăра пулса куртăмăр.**

Унччен пулнă хуçалăхсенче малашлăхпа пурăнакансем çĕнĕ техника туяннипе пĕрлех киввине те манăçа кăларманни, ĕç условийĕсем пирки шутлассине иккĕмĕш вырăна хăварманни курăннăччĕ. Ку хутĕнче вара куç умне ытларах урăхларах ӳкерчĕк тухса тăчĕ.

«Кашни ĕçĕн вăхăчĕ пур», – тет ĕç тĕлне пĕлекен çын. Çапла калать те умри ĕçсене кая хăвармасăр пурнăçлама тăрăшать. Хыçа юлса пыракан ял хуçалăх сулĕ те кăçал хресченĕн тăрăшулăхне çивĕч тĕрĕслерĕ: çĕр ĕçченĕн çуллахи нумай ĕçне типĕ çанталăкра пурнăçлама тиврĕ пулсан, çак услови кĕркунне малалла тăсăлчĕ. Вырмапа ака ĕççене ырана хăвармасăр пурнăçлама условисем çителĕклех пулчĕç. Ĕçле, ан ӳркен кăна. Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем уй-хир ĕççенче алă усса лармарĕç. Вырма вĕçленнĕ май хресчен кăçал кĕрхи культурăсене те сахал мар акрĕ, çĕртмене те çителĕклех пурнăçларĕ. Çапла вара уй-хир ĕççене хутшăннă ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартма та вăхăт çитрĕ. Кунта та çанталăк условийĕсем хресчене майлă пулчĕç.

Техникăна хĕллехи управа лартнине пăхнă-тĕрĕсленĕ май маларах асăннă хуçалăхсенче кашнинчех çĕннине туяничченех мĕн пуррине упрасси çине еплерех пăхнипе интереслентĕмĕр. Çуркуннерен хура кĕрччен хирте ĕçленĕ техникăна хĕллехи управа пач лартман хуçалăхсем, паллах, çук. Анчах паянхи куна управ ыйтăвĕпе пур çĕрте те туллин ĕçлеменнине те палăртмасăр иртеймеспĕр.

Малтанах «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн машинăпа трактор паркне çитрĕмĕр. Хапхаран кĕрсенех ял хуçалăх техникин шурă ураписем кунта вĕсене хĕле хатĕрлессипе ĕçлени пирки каларĕ. Анчах çывăха пырсан... Тирпейлĕх çукки, техника çумпа «туслă пулни», тырă вырнă комбайнсем çуса тасатнă хыççăн ураписене шуратнипех çырлахни **(сăн ӳкерчĕкре)**, ĕçленĕ техника штокĕсем «парка çутатса ларни» управа лартас ĕçсем вĕçленменни пирки систерчĕç. Мĕн тăвас ĕнтĕ?..

«Свобода» хуçалăхра техникăна управа лартассипе ĕçсем малалла пыратчĕç. Уй-хирте ĕçленĕ техникăн ытларах пайĕ гаражра ларнăран юр-çумăр ăна пысăк сăтăр тăвас çукки куç умĕнче. «Ударник» хуçалăхра та хĕвел айĕнче ларакан техникăна тĕл пулмарăмăр.

Ильич яч. хис. хуçалăхăн паркĕнче вара ĕçлекен техникăна упрассипе тăтăшах шыравра пулни курăнчĕ. Кунта хирте ĕçлекен техникăна упрама ятарлă ангар туни – ырă пулăм. Çав вăхăтрах техникăна ГОСТпа килĕшӳллĕн управа вырнаçтарассипе те кая хăвармасăр пурнăçламалли пур-ха.

«Путь Ильича» агрофирмăра. Кунта техникăна упрасси çине пӳрне витĕр пăхнипе тĕл пултăмăр. Хĕвел çиесрен пĕр урапана та шуратман, ĕç хатĕрĕсем çинчи пиçиххисене (ременьсене) пушатман, ĕçлекен пайсене тутăхсаран дизель çăвĕ сĕрсе хӳтĕлемен. Çитменнине çĕр хатĕрлекен техника çум айĕнче ларни, хăватлă трактор пире «куç хĕсни» **(сăн ӳкерчĕкре)** ĕç аллисем чылай çĕре çитменнине каларĕç.







Умра Михал кунĕ. Çанталăк самаях сивĕтни, сывлăшра час-часах юр пĕрчисем çаврăнни, кун кĕскелнĕçемĕн кĕскелни – йăлтах хĕл çывхарăвĕн паллисем. Апла пулсан техникăна управа лартассипе кунсем мар, сехетсем юлаççĕ. Çавăнпа ыран та уяр, илемлĕ çанталăк пуласса кĕтекенсем паян тĕрĕсех тăваççĕ-ши? Пирĕн шутпа – тĕрĕс мар.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн редакторĕ.**